# Кристина юратăвĕ

Роман.

гор. Чебоксары
ул. Привокзальная
дом № 12, кв. 20
Давыдов В.Н.

гор. Казань, 420049
ул. Жданова, д. № 1, кв. 3
Давыдов Виталий
Николаевич.

Çак романа австри революционерки Кристина Низерк пурнăçĕпе [illegible] çинчен çыратăп.

КРИСТИНА ЮРАТАВЁ

Роман

Çак романа хамăр çĕршывра совет влаçĕ туса хуйăранпа утмăл çул тултарнă ятпа чунтан-чĕререн юратакан чăвашпа тутар халăхĕсене халалласа çыратăп.

# ПЕРРЕМĔШ ПАЙĔ

## I

Çулла. Еш-ешĕл вăрман çийĕн авăк çил шăхарса вĕрет. Вăл çулĕ чăрăшсемпе сарлака авăс йывăççисен тăррисене лакать, вăхăчĕ-вахăчĕпе вĕсене тĕпĕнченех суллантарать. Йывăççем çав вăхатра пурте пĕр енелле тайăнаççĕ, унтан каялла авăнса, тăррисемпе пĕр-пĕрне ыткăннă пек шавласа лараççĕ. Вăрман хĕррине Висла юхса выртать. Ун çыранĕ херринче икĕ хутлă, хĕрлĕ черепицăпа витнĕ çуртсем выртаçнă. Ку пўртсене тулашĕнчен пăхсан вĕсене иртнĕ ĕмĕрте тунине пĕр иккĕленмесĕрех чухласа илетĕн. Хайсен ĕмринче темĕнле çил те курнă пулĕ çав çак çуртсем. Анчах та çилсем пĕр кана чăрсарланса ашканаççĕ те лăпланаççĕ, ик-виçĕ сехетрен вуçех чарăнса лараççĕ.

Висла хĕрринче авалтан белоруссемпе еврейсем тата поляксем пурăннă. Çак таврана мĕн ĕлĕкрен нимĕçсем тапанса тăна. Нимĕçсем вĕсен пурлахĕсене тытса илнĕ, выльахсене хăваласа кайнă. Çапла вĕсем выранти халăха канлĕ пурăнма паман. Çавăнпа та аслă Князь аллинче тăракан Польша патшалахĕ, хăйсен халăхĕсене нимĕçсенчен сыхлама, Раççей империйĕнчен пулăшу ыйтнă. Вырăссем хĕвеланаçĕнчи туссем ыйтнипе килĕшнĕ. Унта Абуков ертсе пыракан интернационалла питĕ те лайăх вĕренсе хатĕрленнĕ çар ушкăнне янă. Çак интернационалистсен отрячĕн тĕп леллевĕ Раççейпа Польша халăхĕсен хушшинчи туслаха çирĕплетесси тата çак хĕвеланаçĕнчи юлташлă патшалăх çине нимĕçсем тапанасран сыхласа тăрасси пулна.

Икĕ уйăх каярах çак Висла хĕрринчи чуд çуртсене вырăссен интернационалла çарĕн пĕр ушканĕ çитсе вырнаçрĕ. Вал кунта Варшава хули çывăхĕнчен куçса килчĕ. Кашни ирпе ултă сехетре горнист хăйĕн трубине ярса илет те, пуçне кăвакал пек хыçалалла каçартса, янратма тытанать. Çил вăрман шăплăхне вăратса, хирсем урлă, юханшыв тăрăх инçе-инçене илсе каять унăн сассине.